Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчеле тухать

30 (7774) № ✻ Шăмат кун, 2010 çулхи апрелĕн (ака) 24-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**Ыран – Чăваш чĕлхин кунĕ**

## Анне чĕлхине упрамалла, хисеплемелле

*Чăвашсене çутта кăларакан И.Я. Яковлев çуралнă кун – апрелĕн 25-мĕшĕнче – эпир Чăваш чĕлхи кунне паллă тăватпăр. Районти пур шкулта та халĕ чăваш чĕлхи эрни пырать, культура учрежденийĕсенче куравсемпе тематикăлла каçсем иртеççĕ. Çак мероприятисене пĕтĕмпех чăваш чĕлхин хисепне çӳллĕрех шая хăпартас тесе йĕркеленĕ: вырăсланма пуçлани сисĕнет юлашки çулсенче.*

*Пирĕншĕн – чăвашсемшĕн – çак кун чăннипех те пысăк уяв пулса тăмалла. Шыв юххи пек илемлĕ кĕвĕллĕ тăван чĕлхемĕр пурришĕн савăнмалла пирĕн, мăнаçланмалла. Сĕм авалтан пыракан, ĕмĕрсем хушшинче çухалман чĕлхе пурри – чăваш халăхĕшĕн ылтăнран та хаклăрах пуянлăх.*

*«Чĕлхе пĕтсен, халăх пĕтет», тенĕ-çке ĕлĕкех. Апла пулсан анне чĕлхине манма юрамасть пирĕн. Çавăнпа хамăрăн вĕренекенсене уроксенче те, класс тулашĕнчи ĕçсенче те çакăн пирки аса илтерсех тăратпăр. Вăтанмалла мар чăвашла калаçма», – палăртать хăйĕн шухăшне Чуманкассинчи вăтам шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен тата директорăн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ Валентина Николаевна Николаева.*



*Килĕшмелле унпа: Чăваш Енре çуралса, пĕчĕкренех чăвашла калаçса ӳснĕ çынна чăвашла калаçни пур çĕрте те килĕшет.*
**Ю. АРКАДЬЕВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

**МУРКАШ РАЙОНĔН ХИСЕПЛĔ ÇЫННИСЕМ!**

Сире Чăваш чĕлхи кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Чăваш чĕлхи – атте-анне парнеленĕ пуянлăх. Пирĕн ачалăх, пирĕн пурнăç, пирĕн малашлăх çыхăннă унпа. Çавăнпа та хамăрăн ачасене тăван ен историйĕпе культури, чăваш халăхĕн ырă йăли-йĕрки çине таянса воспитани памаллине асра тытмалла пирĕн. Кăçал Учительсен çулталăкĕ пулни пире тепĕр хут çак яваплăх çинчен аса илтерет.

Чăваш чĕлхи кунне эпир чăвашсене çутта кăларакане И.Я. Яковлев çуралнă кун паллă тăватпăр. Вăл пирĕн ентешĕмĕр – Муркаш районĕнче çуралса ӳснĕ чăвашсен пĕрремĕш писателĕсенчен пĕри, çавăн пекех историкĕ, этнографĕ, фольклорисчĕ С.М. Михайлов-Яндуш пуçланă ĕçе вĕçне çитерет. Спиридон Михайловичăн ĕçĕсем чăваш художество литературин никĕсĕ пулнă пулсан, Иван Яковлевич чăваш çырулăхне йĕркелет, чăваш чĕлхи ытти чĕлхесемпе тан пултăр тесе чунне парса ĕçлет. Тепĕр паллă ентешĕмĕр – Муркаш Ен ывăлĕ, чăвашсен пĕрремĕш историкĕсенчен, этнографĕсенчен, чĕлхеçисенчен пĕри Н.М. Никольский вара И.Я. Яковлевăн ĕмĕтне пурнăçа кĕртет: чăвашсен пĕрремĕш «Хыпар» хаçатне йĕркелет. Çак маттур чăваш ывăлĕсем тăрăшни ахаль пулмарĕ. Паян тăван чĕлхемĕр çепĕççĕн, ирĕклĕн янăрать. Вăл çĕршывăмăрта вырăс чĕлхипе пĕрле патшалăх чĕлхи пулса тăчĕ.

Иван Яковлевичăн халалĕсем пире пурăнма вĕрентеççĕ, вĕсем паян та пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вăл каласа хăварнă пек пирĕн ытларах ырă ĕçсем тума тăрăшмалла. Май килнĕ таран пĕр-пĕрне пулăшмалла, пĕрин хыççăн теприн малалла туртăнмалла. Кун пек чухне умри тĕллевсене те пурнăçлама çăмăлрах. Районăмăр та аталану çулĕпе çирĕппĕн малаллах кайĕ.

Сире малашне те ытарайми çепĕç, янăравлă тăван чĕлхемĕре, хамăр халăхăмăрăн ĕмĕртен пыракан историне, культурине, йăли-йĕркине сыхласа хăварас, аталантарас ĕçре çитĕнӳсем тума ырлăх-сывлăх, телей сунатăп.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

**Кĕскен**

### Библие чăвашла вулатпăр

Кĕçнерни кун К.В. Иванов яч. хис. Чăваш академи драма театрĕнче библие чăвашла пичетлесе кăларнă ятпа чаплă уяв пулчĕ.

Библие пĕтĕмĕшле куçарас ĕç вĕçленчĕ, ăна икĕ ĕмĕр каялла пуçланă.

Чăвашсем (вырăссем хыççăн иккĕмĕш халăх) паян пĕтĕм библие чăвашла вулама пултараççĕ.

### Балет фестивалĕ уçăлчĕ

Кĕçнерни кун Пĕтĕм тĕнчери XIV балет фестивалĕ «Лолита» спектакльпе уçăлчĕ. Спектакле Анна Гроголь-Алексидзе лартнă.

Черетлĕ фестиваль республикăри культура пурнăçĕнче палăрăмлă вырăн йышăнчĕ.

**Çур аки – 2010**

## Ака ĕçĕсем пуçăнчĕç

Çак кунсенче районти хуçалăхсенче ака ĕçĕсем пуçăнчĕç. Ильич ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче (ертӳçи И.В. Николаев) çурхи ял хуçалăх культурисене акма тытăннă. 20 гектар сĕлĕ акса хăварнă ĕнтĕ.

Çĕртме пуссисене сӳрелесе нӳрĕке хупласа хăварас ĕçсем «Восток» (50 гектар), Ильич ячĕпе хисепленекен (200 гектар), «Свобода» (50 гектар) хуçалăхсенче, А.И. Толстовăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче (20 гектар) тытăннă. Районĕпе çĕртме пуссисене 320 гектар сӳреленĕ.

Çурхи тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсен вăрлăхĕсене пĕтĕмпе 2782 тонна имçамламалла пулсан, пĕтĕмпе 170 тонна имçамланă. Ку вăл 6,1 процент пулать. «Свобода» хуçалăх кăна çак ĕçе 100 процентчĕпех пурнăçлама пултарнă.

Çĕр улми вăрлăхне 2220 тонна суйласа яровизацилеме хунă. Ку вăл планпа пăхнин 48,5 проценчĕ пулать. «Восток» хуçалăхра, «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра, С.К. Сретинскийăн, А.И. Толстовăн хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче ку ĕç вĕçленнĕ.

Нумай çул ӳсекен курăксене 245 гектар çинче минераллă удобренисемпе апатлантарнă. Вăл шутран Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхра 20 гектар çинче, «Свобода» хуçалăхра 140 гектар çинче, Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра 10 гектар çинче, «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра 20 гектар çинче, С.К. Сретинскийăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче 40 гектар çинче.

Кĕрхи культурăсене пĕтĕмпе 337 гектар çинче сӳрелесе нӳрĕке хупласа хăварнă.

Нумай çул ӳсекен курăксене 350 гектар çинче минераллă удобренисемпе апатлантарнă. Çак ĕçе «Ударник» хуçалăхра 300 гектар çинче туса ирттернĕ.

Нумай çул ӳсекен курăксен лаптăкĕсене сӳрелесе нӳрĕк хупласа хăварас ĕçе 1057 гектар çинче туса ирттернĕ. Ку ĕçе вара «Волга», «Восток», Ильич ячĕпе хисепленекен, «Свобода», «Ударник», Чапаев ячĕпе хисепленекен, Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхсенче, В.А. Гавриловăн тата А.И. Толстовăн хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче тытăннă.

**(Хамăр инф.).**

**Пирĕн интервью**

## Камсем тивĕçеççĕ-ха хваттере?

***Раççей Федерацийĕн Президенчĕ 2008 çулхи майăн 7-мĕшĕнче йышăннă «1941–1945 çулсенчи Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсене çурт-йĕрпе тивĕçтересси çинчен» 714 № Указĕпе килĕшӳллĕн федераллă бюджет шучĕпе вăрçă ветеранĕсене çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма майсем туса пама пăхнă. Çак ĕç пирĕн районта мĕнле пулса пырать-ха? Кун пирки эпир район администрацийĕн пуçлăхĕн çумне, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçине Владимир Германович НИКИТИНА каласа пама ыйтрăмăр.***

– Малтанах çавна каласа хăварасшăн. Хальхи вăхăтра пирĕн районта Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсем 98 çын, вăрçăра вилнисен тăлăх арăмĕсем 18 çын шутланаççĕ. Кунпа пĕрлех вăрçă участникĕсемпе танлаштарнисем 9 çын. Вĕсенчен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма ыйтса пĕтĕмпе 33 çын учета тăнă. Вăл шутран вăрçă участникĕсен тăлăх арăмĕсем 6-ăн. Çавна валли вĕсем техника инвентаризацийĕн бюровĕнче, регистраци палатинче документсем хатĕрлеççĕ. Унта граждансен пурăнмалли урăх çурт-йĕр пуррипе çуккине кăтартни те пулать. Ытти пур документсемпе пĕрле паспортсен ксерокопийĕсем кирлĕ пулаççĕ.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

**Астăвăм**

## Чернобыль ахрăмĕ

Апрелĕн 26-мĕшĕнче пирĕн çĕршывра радиациллĕ аварисемпе катастрофăсенче пуç хунисен Астăвăм кунне паллă тăваççĕ. Чернобыльти атомлă электростанцинче пулнă аварие пĕтерекенсем паянхи кун пирĕн районта пурĕ 27 çын.

Çак хăрушă авари пулнăранпа 24 çул çитнине халалласа, унта хутшăннисене чысласа, çак кун район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕн методика пӳлĕмĕнче ятарлă мероприяти иртет. Аварие сирме хутшăннисемпе район пуçлăхĕ Ю. Иванов, Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссариачĕн уйрăмĕн пуçлăхĕ В.Е. Андреев тата Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Г. Данилов тĕл пулса калаçĕç. Чернобылецсен çавăн пекех хăйсене тивĕçекен çăмăллăхсем çинчен те тĕплĕнрех ыйтса пĕлме май пулать: социаллă страхованипе ĕçлекен специалистсем, социаллă хӳтлĕх пайĕн тата Пенси фончĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕсем ыйтусем çине тулли хуравсем парĕç.

Паян вара Шупашкарти Çĕнтерӳ паркĕнчи Астăвăм обелискĕ патĕнче митинг иртет. Унта пирĕн район делегацийĕ те хутшăнать.

**Йыхрав**

## Черетсĕр 40-мĕш лару пулать

Депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн 2010 çулхи апрелĕн 23-мĕшĕнчи 40 № йышăнăвĕпе депутатсен районти Пухăвĕн тăваттăмĕш суйлаври черетсĕр 40-мĕш ларăвне район администрацийĕн ларусен залĕнче 2010 çулхи апрелĕн 29-мĕшĕнче 10 сехетре пухма йышăннă.

Ларура пăхса тухма кун йĕркине çак ыйтусене кĕртме йышăннă:

Муркаш районĕн бюджетне 2009 çулта мĕнле пурнăçланин отчетне çирĕплетесси çинчен; депутатсен районти Пухăвĕн 2009 çулхи ноябрĕн 27-мĕшĕнчи С-36/2 № «Муркаш районĕн 2010 çулхи бюджечĕ çинчен» йышăнăвне улшăнусемпе хушăмсем кĕртесси çинчен; Муркаш районĕн 2010–2012 çулсенчи экономикăпа социаллă аталанăвĕн програми çинчен; депутатсен районти Пухăвĕн 2002 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнчи С-8/5 № «Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнчи муниципаллă харпăрлăхри пурăнмалли мар çурт-йĕре арендăна илесси çинчен» йышăнăвне улшăнусемпе хушăмсем кĕртесси çинчен; ял тăрăхĕсен администрацийĕсен полномочийĕсен пайне парасси çинчен, наградăсем пама сĕнесси çинчен.

**Саламлатпăр**

## Саламлатпăр



Кăпас ялĕнче пурăнакан ĕçчен те ырă кăмăллă аннене, юратнă асаннене, тăванăмăра – **Маргарита Фоминична ИЛЬИНАНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Эсĕ яланах хăвăн чун ăшшипе çывăх çынсене ăшăтса, çемье тăнăçлăхне упраса тăратăн. Тайма пуç сана эсĕ пурришĕн. Пурнăçу малашне те çурхи хĕвел пек çутă, кĕрхи кун пек пуян пултăр.

**Салампа: ачисем, мăнукĕсем, кинĕсем, тăхлачисем, тăванĕсем.**

Çут тĕнчери хаклăран та хаклă çыннăмăра – юратнă аннене, кукамая, мамака, хунямана – Çĕньял Муркаш ялĕнче пурăнакан **Зинаида Андреевна КАЗАКОВАНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Сана çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, пурнăçра ачусемпе тата мăнукусемпе савăнса пурăнма ырлăх-сывлăх сунатпăр.

**Салампа: хĕрĕ, кĕрӳшĕ, ывăлĕ, кинĕ, 4 мăнукĕ.**